*Алран кайми аки-сухи, асран кайми атти-анни...*

# ХРЕСЧЕН САССИ

26 (2539) №
Хакĕ ирĕклĕ

2015
апрель
ака 10

ЭРНЕКУН

1991 çулхи апрелĕн 21-мĕшĕнче тухма тытăннă



## Чăваш Митрополийĕн пуçлăхĕ, Шупашкарпа Чăваш Митрополичĕ Варнава Турра юратакан кĕтӳçĕсене, манахсемпе манахла пурăнакансене, Чăваш Митрополийĕн, Шупашкарпа Чăваш Епархийĕн Вырăссен Чăн тĕнне ĕненекен мĕнпур ачисене Мăнкун ячĕпе саламласа янă çырăвĕ

"Тӳпе савăнмаллипех савăнтăр, Çĕр те хĕпĕртетĕр; пĕтĕм тĕнче – курăнакан- ни те, курăнманни те – савăнтăр: Христос ĕмĕрлĕх телей кӳрсе тăрать".

Христос Чĕрĕлсе тăнă çутăран та Çутă, хавасларан та Хаваслă çак куна пире каллех кĕтсе илмелле тунăшăн эпир Турра тав тăватпăр!

Чунăмăрсемпе чĕремĕрсене паян Мăнкун хавасĕ иксĕлми тултарса тăрать.

Христос Чĕрĕлнĕ!

Çăлакан Христос Хăй ирĕк тусах асапланас умĕнхи каç вĕренекенĕсене каланийĕ: "Эпĕ сире каллех курăп та, сирĕн чĕрĕрсем савăнса кайĕç", – тенийĕ паян каллех чăна килет /Иоан. 16, 22-23/.

Сăваплă Апостолсем Чĕрĕлсе Тăнă Христоса чунĕсен куçĕсемпе те ӳт куçĕсемпе курнă пек эпир курман пулин те, Христосăн вĕренекенĕсем пекех, чунăмăрсем тивлет ырăлăхĕпе çĕкленнине туятпăр.

Турăран хăракан хĕрарăмсем, Унăн Тупăкĕ патне ӳте сĕрсе ырăлатма чи малтан çу йăтса пынăскерсем, Чĕрĕлсе тăнă Христоса курса питĕ хĕпĕртенĕ.

Ăслă вăрă-хурах пек: "Эй, Турă, Патшалăхна кĕрсен асна ил мана" – тесе камсем калаççĕ – Мăнкун савăнăçĕ çавсен виçесĕр. Вĕсем Мăнкунра Чĕрĕлсе тăнă Турă хăйсене: "Паянах Манпа пĕрле Райра пулатăн", – тесе каланине чунĕсемпе туяççĕ те илтеççĕ. Эпир хамăра Мăнкун праçникне кĕтсе илме хатĕрленĕ, Турăн Таса Ӳчĕпе юнне ăша илсе Вăл асапланнипе те, Чĕрĕлсе Тăнипе те пĕрлешнĕ пулсан, пире те çак хальлĕнех чăн-чăн савăнăç çупăрласа тăрĕ.

Христос Чĕрĕлсе Тăнийĕ вăл – çыннăн этемлĕхĕ, шуйттана, çылăха тата вилĕме парăнтарса тунă Аслă Çĕнтерĕвĕ. Иисус Христос Турăмăр вилĕмрен Чĕрĕлсе Тăнă хыççăн çынна Çăлас тĕлĕшĕнe тунă хăватлă ĕç вĕçленнĕ. Сăваплă Павел Апостол каланă: "Адам урлă пурте вилнĕ пек, Христос урлă пурте чĕрĕлсе тăрĕç", – тенĕ.

Эй, Чĕрĕлсе Тăнă Турăмăрпа пĕрлехи юратнă аттемсем, пиччемсемпе шăллăмсем, аппамсемпе йăмăкăмсем!

Эпир те, хаклă çу йăтса пынă хĕрарăмсем пек, Христос Вилĕмрен Чĕрĕлсе тăни çинчен ырă хыпара пирĕн çывăх çыннăмăрсем патне çитерĕпĕ Христосăн Апостолĕсем пек пулар. Пире Турă Патшалăхĕн Евангелине Христосăнни евĕр юратупа, чаплăх сăмахĕпе, ырă ĕçсем тунипе, ырă пурăннипе пур енлĕн сарма чĕнсе илнĕ. Христос Чĕрĕлсе тăнин çуттине ĕненӳсĕр пурăнакан çынсен тĕттĕмлĕхĕ хушшине илсе çитерер.

Ăçта курайманлăх – çавăнта юрату илсе çитерер. Пирĕн сăмахăмăрсемпе ĕçĕмĕрсем усал чĕресене çемçетчĕр, пĕтерекен çылăхсенчен çынсене çăлччăр, вĕсене пурнăçăн йывăр вăхăтĕнче пулăшчăр.

Кил-йыша çирĕплетес, çамрăк ăрăва Тӳрĕлĕх Сывлăшĕ вĕрентнĕ пек чăнлăхра тăма, урă та ырă, таса йăлайĕркепе пурăнма вĕрентес тĕлĕшпе пирĕн уйрăмах хытă тăрăшмалла. Йывăр лару-тăрури çынсем патне çитмелле, вĕсене сăмахпа та, ĕçпе те пулăшмалла. Чăн тĕн çыннийĕн чиркӳ картишĕнчен тухмасăрах пурăннипе çырлахмалла мар: унăн хăйĕн чунне тасатассишĕн тăрăшнипе пĕрлех пулăшу, йăпату кирлисемпе юнашар пулмалла; таса йăла-йĕркепе пурăнса ыттисене ырă тĕслĕх кăтартмалла.

Эй, Турра юратакан кĕтĕвĕм, эпĕ каллех, пĕтĕм чĕререн татах саламлатăп та кĕллĕмсем урлă акă мĕн сунатăп: хамăрăн Таса Чиркӳ Тăван çĕршывăмăрăн мухтавĕшĕн кулленех тăрăшса тăрмашса пурнăçлакан кулленхи ĕçĕсене сире Чĕрĕлсе Тăнă Христос хăйĕн иксĕлми тивлечĕпе ырăлăхне парсах тăтăрччĕ!

Христос Чĕрĕлсе Тăнă Çуттăн шевлийĕ тата Турăн калама пĕлмелле мар юратăвĕ яланах сирĕнпе пуринпе те пĕрле пултăр! Аминь.

Христос Чĕрĕлнĕ! Чăн-чăнах Чĕрĕлнĕ!

Чĕрĕлсе Тăнă Христосăн юратăвĕпе, Турăн хĕрхенекен кăмăлĕпе –
ВАРНАВА,
Шупашкар тата Чăваш Митрополичĕ,
Чăваш Митрополийĕн пуçлăхĕ.
Христос Пасхи /Мăнкунĕ/.
Шупашкар хули,
2015 çул.

### ПАХЧИ-ПАХЧИ

## Апрель уйăхĕнчи ĕçсем

✓Сенĕкпе е кĕреçепе садри йывăçсем тавра тата рет хушшинчи çĕре чавса тухатпăр. Тымарсене сиенлетесрен асăрханăр. Йывăç вулли çумĕнче 5-6 см тарăнăш кăна чавăр.

✓ Апрельте улма-çырла йывăççисем ӳсме тытăнаççĕ, кун пек чухне вĕсене азот удобренийĕпе (шĕвеккипе) апатлантарни пĕлтерĕшлĕ. Мочевинăна 1 тăваткăл метра 9-13 г, аммиак селитрине 12-15 г хывмалла. Чăх-чĕп каяшĕпе апатлантарас пулсан ăна 10-12 хут шывпа хутăштармалла.

✓ Çĕр пиçсе çитсессĕн улма-çырла йывăççисем лартма тытăнмалла. Малтан шăтăк хатĕрлĕр, унти çĕр ăшăнсан лартма пуçлăр. Папка çуриччен йывăççене лартса пĕтермелле.

✓ Çĕр пиçсе çитнине пĕлес тесен ăна алла илĕр, ывăçласа чăмăртăр та ирĕке ярăр (кăкăр шайĕнче тытмалла). Вăл çăмăллăн сапаланчĕ пулсан çĕр ытлашши типнĕ. Енчен те пачах та саланмасан – пиçсе çитмен, чавма иртерех. Алăри чăмакка йăванса кăшт саланчĕ пулсан чавма тытăнăр.

✓ Апрель çурринче çĕршывăн вăтам тăрăхĕсенче уçă çĕр çине редис акма юрать. Унăн вăрлăхĕшĕн 3 градус сивĕ те хăрушă мар, анчах вăл типĕ сывлăшпа çĕре пачах та килĕштермест.

✓ Çĕр çырли тĕммисене типнĕ тата чирлĕ çулçăсенчен тасатăр, кăпкалатăр. Çуркунне вĕсен тымарĕ çаралать, çавăнпа кăпкалатнă чухне тăпра купаласа хупмалла. Анчах асăрханăр: "чĕрине" ан хуплăр!

✓Ăшă теплицăсенче хăяр, кабачок, кавăн вăррисене акма юрать. Кайран калчасене уçă çĕр çине е пленка айне куçарса лартăр.

### КИРЛĔ ПУЛĔ

Хутаçлă йӳçĕ пăрăçа 1 кг е типĕтнине 0,5 кг илĕр те 10 литр шывра 2 талăк тытăр. Ун хыççăн вăйсăр çулăм çинче 1 сехет вĕретĕр, 2 талăк вăл тăрăлса лартăр. Шĕвеке бутылкăсене тултарăр та тачă хупăр. Сулхăн вырăнта шĕвек вăрах упранма пултарать.

Унпа пахчари ӳсен-тăрана папка çуриччен пĕрĕхтермелле (çур литр пăрăç шĕвекне 10 литр шывпа хутăштарса). Çулçă кăларсан тата малашне усă курма 10 литр шыва 100 гр хутăш шĕвек хушни те çителĕклĕ. Çапла майпа вĕтĕ хуртсене, лăймакаллă кăпшанкăсене пĕтерме пулать. Шĕвекпе кашни икĕ эрнерен сапмалла. Тухăçа пуçтариччен 20-30 кун юлсан пĕрĕхтерме юрамасть.

**ПАЯН кун тăршшĕ 13 сехет те 46 минут. Уйăх катăлать.**

**Лариван кунĕ. Çак кун çурхи хĕвелпе чи малтан çеçке çурнăран ама хупахĕн чечекне чысласçĕ. Лариван кунĕнче çуна çулне тупаймăн. Асра тыт: çак кун çунана кĕлете кĕртсе хур, урапана картише кăлар. Ку вăхăтри çил темĕнле вăйлă пулсан та çĕршĕн усăллă.**

**ЫРАН – хурăн кунĕ. Хурăна итленĕ. Ăна хисеплесе пурнăç, сывлăхпа çутăлăх йывăççĕ тенĕ. Чирлĕ ачана хурăн хуллипе çапсан вăл сываласса ĕненнĕ ватăсем. Хурăн туратне çурт тăррине хурсан çиçĕм çапнинчен пулăшасса шаннă. Аваллан çӳрекен халап тăрăх – асарписер çанталăкра шăпах хурăн йывăç тураттисем айне пытанса Турă Амăшĕпе унăн ывăлĕ Христос çăлăннă.**

**ВИÇМИНЕ – Иван кунĕ е Аслă Мăнкун уявĕ. Çак кун нумайăшĕ каргишре çӳреме шикленнĕ. Кил-çурта сыхлакан хĕрт-сурт тарăхнăран килтисене палламасть тенĕ. Кун пек чухне вăл хăйĕн çуртне те аркатма пултарать-мĕн. Теприсен шухăшĕпе кивĕ тирĕ сийĕнни ăна ыраттарнă. Виççĕмĕшĕсем вăл вупăр карчăка качча тухасшăн пулнине ĕненнĕ. Хурăн çирĕкрен маларах çулçă кăларсан типĕ çу çитессе кĕт, çирĕк маларах симĕсленсен çулла çумăрлă пулĕ.**

## Мăнкунхи сăнавсем

Мăнкун каçĕнче çăлран шыв ăсса килме ан манăр. Унпа пӳлĕмсене пĕрĕхтерĕр, уйрăмах ача-пăчанне. Çапла туни усалтĕселрен, ырă мар шухăшсенчен тасалма пулăшать.

Мăнкун эрнинче е кунĕнче çуралнă ача ăнăçлă та сывă çитĕнет, пысăк çын пулать.

Качча кайман хĕрсен Мăнкунра чиркӳри служба тăнă чухне çапла каламалла: "Чĕрĕлнĕ Христос! Мана каччă парнеле!"

Мăнкунра юратупа çыхăннă ĕмĕтсем пурнăçланаççĕ тенĕ. Чавсана ыраттарсан савни асаилет. Купăста яшкине таракан е шăна лексен тĕлпулăва кĕт. Тута кĕçĕтни – чуптăвасса.

Мăнкун эрнинче шавлама, виçесĕр ерех ĕçме юраман.

## Солярка пулăшать

**? Хăй вăхăтĕнче асатте мана садри йывăççене сăтăрçăсенчен хӳтĕлеме вĕрентнĕччĕ. Вăл сада солярка пĕрĕхтеретчĕ. 80 мл солярккăна 10 литр шывпа хутăштаратчĕ те лăпкă çанталăкра йывăççене сапатчĕ. 1 литр солярка çулталăка çитетчĕ. Нимӗнле химикат та туянман. Халĕ хамăн дача пур та çак майпа усă курма юрать-ши тетĕп.**

**Николай КЛЕМЕНТЬЕВ. Çĕрпӳ хули.**

Специалист ăнлантарнă тăрăх – солярккăна кунашкал виçепе хутăштарни тухăçлă меслетсенчен пĕри. Сăтăр тăвакан хурт-кăпшанкă çăмартине таса вырăна хума тăрăшать. Солярка шăрши вĕсене хăратать. Анчах вăл часах сирĕлсе пĕтет, çавăнпа çăмарта хунă вăхăтра шĕвекпе пĕрĕхтерсен питех те аван. Ытти чухне усси сахал.

| ÇАНТАЛĂК | | | | | | | |
|---|---|---|---|---|---|---|---|
| | Шупашкарта | Вăхăт | 10.04 | 11.04 | 12.04 | 13.04 | 14.04 |
| | Температура, °С | 2-4 сехетре | +3 | +3 | +3 | +6 | +6 |
| | | 14-16 сехетре | +6 | +8 | +7 | +14 | +14 |
| | Çумăр çăвать | | ☂ | – | – | – | – |
| | Атмосфера пусăмĕ, мм. | | 741 | 744 | 754 | 750 | 747 |

### ÇЫРĂНТАРУ – 2015

**Хисеплĕ вулакансем! Кăçалхи иккĕмĕш çур çулта «Хресчен сасси – Кил» хаçат уйрăм кăларăмпа тухма пăрахать. Июль уйăхĕнчен пуçласа вăл 8 страницăпа тухса тăракан «Хресчен сасси» хаçат ăшĕнче пулĕ. Çур çуллăх хак – 297 тенкĕ те 78 пус, çырăнтару индексĕ – 54838. Халĕ хăшĕ-пĕри «Хресчен сасси – Кил» ятлă уйрăм хаçата çырăнса илме сĕнни «Хыпар» Издательство çурчĕпе пачах та çыхăнман!**

ВУЛАКАН СĔНЕТ



## Ревень

Вăл хупах пек сарăлса ўсет. Унăн çулçă тунисенчен компот, кĕсел, кукăль пĕçереççĕ. Çамрăк çулçисемпе борщ, голубцы хатĕрленĕ чухне усă кураççĕ. Пĕçернĕ ревень йўçĕрех панулми тути калать. Çак пахчаçимĕçре 1-3 процент сахăр, 0,8-1 процент белок, 1,6-2,6 процент органика кислоти упранать. Вĕсемсĕр пусне ревень кали, кальци, фосфор, тимĕр, магни тăварĕсемпе пуян. Унра С, А, РР витаминсем пур. Ревеньрен хатĕрленĕ апат çисен хырăмлăх, пĕвер лайăх ĕçлеççĕ.

Çавăн пекех вăл ўт-пў йывăрăшне чакарма пулăшать. Организмран ытлашши шыва, наркăмăшлă япаласене кăларать.

Имшерленес тесен кунсерен 100 г ревень çулçи çимелле. Кашни кун 2-3 хутчен çак пахчаçимĕçрен хатĕрленĕ компот ĕçмелле.

Ал-урана ыраттарсан ревень тунине вĕтетсе суран çине хумалла. Ăна пылпа хутăштарсан аван.

Сăн-питри пигмент патасенчен (пигментные пятна) хăтăлма ревень сĕткенĕпе сĕрмелле. Ăна çапла хатĕрлемелле: 1 чей кашăкĕ ревень сĕткенне 1/2 чей кашăкĕ уксуспа хутăштармалла. Сиплĕскере кунне икĕ хутчен сăн-пите сĕрмелле.

**Валентина ИВАНОВА.**
**Вăрнар районĕ.**

## Килти аптека

Йывăçсем папка кăларсанах эпĕ килти аптекăна пуянлатма тăрăшатăп. Çавна май хурăн, çăка папкисене пухатăп, ăвăс хуппи хатĕрлетĕп (йывăçа амантас мар тесе çинçе тураттисемпе çеç усă куратăп). Çавăн пекех çĕмĕрт çулçине те пуçтаратăп. Унран хатĕрленĕ шĕвек стоматитран тата гингивитран усăллă. Çĕмĕрт çулçинче чир ертекен микробсене вĕлерекен япаласем пур.

Çĕмĕртĕн типĕтнĕ çулçине 2 апат кашăкĕ илмелле, 500 мл шыва ямалла, çулăм çинче 15 минут вĕретмелле. Плита çинчен илсен 2 сехет тытмалла. Шĕвекпе кунне 5-6 хутчен çăвара чўхемелле.

**Вера САМОЙЛОВА.**
**Куславкка районĕ.**



АЛ АЙĔНЧЕ




• Пўрене тасатма инжир пулăшать. Пĕр стакан сĕте типĕтнĕ 5-6 инжир çимĕçĕ ямалла, кунне пĕр хутчен ĕçмелле.

• Щит евĕрлĕ пар çителĕксĕр ĕçленинчен юмăç курăкĕ (мокрица) пулăшать. Термоса 1 стакан тин вĕретнĕ шыв ямалла, пĕр ывăç юмăç курăкĕ хушмалла, 4 сехет тытмалла, кунне виçĕ хутчен ĕçмелле. Сиплев курсĕ – 3 эрне. Пĕр эрне каннă хыççăн çĕнĕрен ĕçме тытăнмалла.

• Юхан-сурана тўрлетме чăрăштăрри (хвощ полевой) тунинчен хатĕрленĕ çăнăхпа усă курмалла.

ШУТА ИЛМЕ

## Юрла, ентеш, юрла

Юрлани кăмăл-туйăма хăпартнисĕр пуçне ĕмĕре те вăрăмлатать. Ку чăнахах та çапла.

Эпĕ пурнăç тăршшĕпех юрлатăп: хорта, кил-тĕрĕшре, пахчара ĕçленĕ чухне. Юрă юн çаврăнăшне йĕркене кĕртнине, иммунитета çирĕплетнине ăсчахсем палăртнă. Унсăр пуçне вăл организма ăплантарать, ăс-тăна лайăхлатать.

Юрă вăл – чи лайăх эмел. Сывлав органĕсен чирĕсенчен сиплеме, тытăнчăклă калаçнинчен хăтăлма пулăшать, юн пусăмне лайăхлатать, чĕре таппине йĕркене кĕртет.

Ыйхă килмен чухне те юрлани усăллă. Ахальтен мар амăшĕ ачине сăпка юррипе çывăрттарать. Пепкене лăплантарма çакăнтан пĕлтерĕшлĕрех мел шухăшласа тупайман хальлĕхе.

Специалистсем палăртнă тăрăх – юрă юрлани гимнастика тунипе танах. Çавăнпа та талăкра 5 минут та пулин юрламалла. Юрă шăрантарнă чухне пуçа юн пырасси лайăхланать. Çакă çынна ватăлма памасть. Чи кирли вара – чĕрери тунсăха, хуйха-суйха сирни. Çавăнпа та час-часах юрлăр, пурнăçна савăнăр. Юрă-кĕвĕ пур енĕпе те пулăшать: чир-чĕре ирттерет, ĕмĕре тăсать.

**Валентина САВЕЛЬЕВА.**
**Патăрьел районĕ.**

СИППЕ КАЙТĂР

**1. ХЫРĂМЛĂХ ЫРАТСАН:**

✓ Салтак тўми, базилик, пĕтнĕк шывĕпе сиплеме пулать: 600 мл шыва 1 апат кашăкĕ çак ўсен-тăран хутăшне ямалла, 3 минут вĕретмелле, сивĕтмелле, сăрăхтармалла. Кунне 2/3 стакан апат хыççăн виçĕ хутчен ĕçмелле;

✓ кун пек чухне хĕрлĕ клевер та пулăшать. Кашни кун пĕрер çулçă чăмламалла, сĕткенне çеç çăтмалла.

**2. ЫЙХĂ ВĔÇСЕН:**

✓ 1 апат кашăкĕ пыл хушнă 0,5 стакан шыва çывăрас умĕн ĕçмелле;

✓ май уйăхĕнче хир мăкăнĕн тымарĕпе çеçкине пухмалла. Тымарне çуса тасатмалла, тунипе пĕрле тĕттĕм вырăнта типĕтмелле, минтере тултармалла. Ăна пуç айне хурса çывăрмалла;

✓ типĕтнĕ хăмла е вăрманти тĕрлĕ курăк хутăшĕ тултарнă минтер те ыйхă вĕçнинчен пулăшать.

**3. ЎТ-ПĔВЕ СУРАНЛАТСАН:**

✓ Ыратакан вырăна çавракан аснă çĕрулми хумалла;

✓ 500 г шурă шалча пăрçине (фасоль) пĕçермелле, тўмелле, суран çине 1-2 хутчен хумалла.



СĔНЎ-КАНАШ

## Çурхи сиплĕ курăксем

**Шăнăр курăкĕ** çулсемпе сукмаксем, вăрман хĕрринче ытларах тĕл пулать. Унăн çамрăк çулçине суран çине хураççĕ. Вăл ал-урана мĕнпе те пулин кассан, ўт-пĕве пĕçертсен, шăрпăк кĕртсе пулнă сурана сиплеме пулăшать, ыратнине лăплантарать. Хăмпăланса шăтнă юхан-сурана та шăнăр курăкĕн çулçине хурса çыхаççĕ. Çак эмел курăкĕ ăна сарăлма памасть.

Шăнăр курăкĕ çиме те юрăхлă. Унран тĕрлĕрен салат хатĕрлеме пулать.



Пыл хурчĕ сăхнă вырăна тўрех **хăлха çакки** сĕткенĕпе сĕреççĕ. Капла тусан ыратма чарăнать, ўт шыçмасть. Вăл витаминсемпе пуян, йўçĕ. Çавăнпа та çулçа 30 минут тăварлă шывра тытмалла. Паллах, йўçекĕ чакнă май витаминсем те, минерал тăварĕсем те сахалланаççĕ.

Хăлха çакки курăкĕн тымарĕнчен кофе хатĕрлеме пулать. Ăна кофе авăртакан хатĕр-хĕтĕрпе çăнăх пек вĕтетсе вĕреме кĕнĕ шывра пĕçермелле. Пĕр пай сивĕ чечекпе (цикорипе) хутăштарсан – кофе тутлăрах. Вăл ревматизмран, артритран, чĕре тата нерв чирĕсенчен сиплеме пулăшать.

**Серте** çиме юрăхлă витаминлă курăксенчен пĕри шутланать. Унра С витамин тата тĕрлĕ микроэлемент – тимĕр, пăхăр, марганец, титан – нумай.

Сертерен яшка, тĕрлĕ салат хатĕрлеççĕ.

## Çутçанталăк вăйне ĕненмелле

✓ Ура шыççан 2 шăл ыхрана теркăпа вĕтетмелле, 4 стакан шыва ямалла, вăйсăр çулăм çинче 5 минут вĕретмелле, сивĕтмелле. Урана çак шĕвекпе ирхине тата каçхине сиплениччен сĕрмелле.

✓ Çўçе çирĕплетме уйăхра икĕ хутчен çакнашкал маска тумалла: сухан хуппинчен хатĕрленĕ 100 мл шĕвеке 1 апат кашăкĕ хна ямалла, хутăштармалла, пуçа сĕрмелле, целлофанпа хупламалла, тутăр çыхмалла. 30 минутран пуçа шампуньпе çуса тасатмалла, салтак тўмипе вĕлтĕренрен хатĕрленĕ шывпа чўхемелле.

## Юн тымарне тасатма

2 стакан пыла 1 стакан тўнĕ укроп вăррипе, 2 апат кашăкĕ авăртнă кушак курăкĕн тымарĕпе хутăштармалла, термоса ямалла, 2 л тин вĕретнĕ шыв хушмалла, пĕр талăк тытмалла. Хутăша апат умĕн 30 минут маларах ĕçмелле.

Салтак тўмине, сар çип утине, тăкăнман чечеке (бессмертник), хурăн папкине 100-шер г илмелле, хутăштармалла, банкăна ямалла, хупламалла. 0,5 л тин вĕретнĕ шыва 1 апат кашăкĕ çак хутăша ямалла, 20 минут тытмалла, сăрăхтармалла. 1 стакан шĕвеке 1 чей кашăкĕ пыл хушмалла, çывăрас умĕн ĕçмелле. Ун хыççăн çиме те, ĕçме те юрамасть. Юлнă шĕвеке ирхине пăс çинче ăшăтмалла, 1 чей кашăкĕ пыл хушмалла, ирхи апат умĕн 15-20 минут маларах ĕçмелле. Хутăша лайăх хупланă банкăра упрамалла.

Юн тымарĕсене çакнашкал мелпе 5 çулта пĕрре тасатмалла. Çавна май пуç çаврăнма пăрахать, куç çивĕчленет, юн пусăмĕ лайăхланать, çын инфаркт, склероз чирĕсенчен хăтăлать.

*Асăрхаттарни: халăх сĕнекен сывату меслечĕсемпе усă куриччен тухтăрпа канашласа пăхмалла.*

РЕКЛАМА, ПĔЛТЕРЎСЕМ

*СУТАТĂП / ПРОДАЮ*

**4. Немецкие пластиковые ОКНА.** Низкие цены. Пенсионерам скидки. Замер. Доставка – бесплатно. **Без выходных. Т. 8-987-576-65-62.**

**5. Блоки керамзитобетонные** 20х20х40, 12х20х40, 9х20х40 пропаренные, гидро-вибропрессованные заводские от производителя – недорого; **цемент, песок.** Доставка. Разгрузка. Без выходных. Кассовый чек, документы. Т. 8-960-301-63-74.

**6. ПЛАСТИКОВЫЕ ОКНА.** Т.: 89278441501, 674642.

**8. Гравмассу,** песок, **щебень,** торф, кирп. бой, **керамблок, керамзит.** Пенсионерам, уч. ВОВ – скидки. Т. 8-905-199-01-22.

**11. Срубы для бани.** Доставка по ЧР. Т. 37-28-74.

**17. Песок, гравмассу, керамзит,** чернозем, **навоз.** Доставка. Т. 8-905-197-40-19.

**22. Немецкие** ПЛАСТИКОВЫЕ ОКНА. Низкие цены. Пенсионерам скидки. Замер, доставка – бесплатно. Без вых. **Т. 8-927-855-83-55.**

**23. Гравмассу,** песок, бой кирпича, **щебень.** Доставка. Т. 89061355241.

**24. Грабли,** косилки, **сажалки,** копалки, **окучники, опрыскиватели.** Доставка. Т. 89278533596.

**29. Косилки,** грабли, фрезы, **опрыскиватели,** картофелесажалки, **доильные аппараты.** ДОСТАВКА! Т.: 89379559802, 89373758095.

**30. Гравмассу, песок, щебень, керамзит.** Д-ка. Т. 89053465671.

**31. Гравмассу, песок, керамзит,** кирп. бой. Д-ка. Т. 89033225766.

**33. Кирпич** рядовой, лицевой; **керамблоки, кольца.** Доставка. Т.: 89063804835, 89276674605.

35. Пластиковые **ОКНА,** металлические **ДВЕРИ.** Бесплатно: замер, доставка, демонтаж. **Гарантия** 15 лет. **Рассрочка.** Скидки. Т. 8-937-391-39-91.

43. **БРУСЧАТКУ, плиты** тротуарные, **бордюры, водостоки.** Укладка. Т. 8-967-470-27-36 (Мир камней, Чебоксары, пр. Машиностроителей, 1Д).

**49. Керамблоки, цемент, керамзит** в мешках – цены от производителя. Т. 8-905-344-79-32.

**58. Гравмассу, щебень, песок, керамзит,** чернозем. Д-ка. Т. 89276687015.

**59.ТЕПЛИЦЫ от производителя.** Низкие цены. Тел. 48-16-54.

**74. Керамблоки вибропрессованные, пропаренные.** Все размеры. Д-ка. Т. 8-917-677-68-46.

## МĂНКУН СĔТЕЛĔ ҪИНЕ



### Кефирпа хатĕрленĕ кулич

*6-7 кулич валли: 1 л кефир, 6 ҫăмарта, 200-шер грамм услам ҫу тата маргарин, 3 апат кашăкĕ типĕ ҫĕпре, 1 стакан хăйма, 2 стакан сахăр песукĕ, 1 чей кашăкĕ тăвар, 2-2,5 кг ҫăнăх, 3 апат кашăкĕ ўсен-тăран ҫăвĕ.*

1. Чуста валли ăшă кефира, ҫĕпрене, 3 апат кашăкĕ сахăр песукне, 2 стакан ҫăнăха хутăштармалла. Унтан алшăллипе хупласа ăшă вырăна 40 минута лартмалла.

2. Ҫăмарта саррине шурринчен уйăрмалла. Саррине – юлнă сахăр песукĕпе шурă тĕслĕ пуличчен, шуррине тăварпа кăпăкланиччен пăтратмалла.

3. Кăвас чусти ҫине хăйма, кăштах ирĕлтернĕ ҫу, маргарин, ҫăмарта сарри (сахăрпа) ямалла та хутăштармалла. Ҫăнăх ярса чуста ҫăрмалла. Вăл алла ҫыпăҫмалла мар.

4. Чустана алшăллипе хупласа ăшă вырăна лартмалла. Унтан формăсене ўсен-тăран ҫăвĕпе сĕрмелле, ҫурри таран чустапа тултармалла, ăшă вырăна лартмалла. Вăл хăпарсан духовкăна вырнаҫтармалла.

### Джемран – булка

*15 булка валли: ҫĕпре чусти, 1 ҫăмарта, джем е повидло, ўсен-тăран ҫăвĕ.*

1. Чустана ҫăрса йĕтĕрлемелле те икĕ пая уйăрмалла. Пĕр пайĕнчен 8 см сарлакăш ҫаврашкасем касса кăлармалла.

2. Иккĕмĕш пайĕнчен тăрăхсем касса вĕрен пек ҫавăрттармалла, унтан – иккĕшне те.

3. Кашни ҫаврашкана джем хумалла, вăл юхса тухасран хĕррине пĕтĕрсе илемлетмелле.

4. Булкăсене ўсен-тăран ҫăвĕ сĕрнĕ противене хумалла, ăшă вырăна лартмалла.

5. Чуста хăпарсан ҫăмарта лăкаса булкăсене сĕрмелле. 180 градус вĕрилентернĕ духовкăна лартмалла.

### Мăйăр кукăлĕ

*12-14 касăклăх: ҫĕпре чусти, 1 стакан тасатнă аҫтăрхан мăйăрĕ, 1 стакан иҫĕм ҫырли, ўсен-тăран ҫăвĕ, ҫăнăх, 1 ҫăмарта.*

1. Иҫĕм ҫырлине шывра 30 минут шўтермелле, типĕтсе ҫăнăхпа йăваламалла. Мăйăра вĕтетсе иҫĕм ҫырлипе хутăштармалла. Кукăль ăшĕ хатĕр.

2. Чустана ҫўхен йĕтĕрлемелле, 6х30 см виҫепе йăрăмсем касмалла.

3. Пĕр йăрăм ҫине иҫĕм ҫырлипе мăйăр хутăшĕ сармалла. Ўсен-тăран ҫăвĕпе сĕрнĕ формăна хумалла. Ҫапла майпа ытти йăрăмсенчен те рулет хатĕрлемелле, формăна хумалла.

4. Ăна ăшă вырăна лартмалла, ҫăмарта лăкаса ҫиелтен сĕрмелле, 180 градус вĕри духовкăра пĕҫермелле.

### Хура сливăран – рогалик

*15-17 рогалик валли: ҫĕпре чусти, 500 г хура слива, 200 г тасатнă аҫтăрхан мăйăрĕ, ўсен-тăран ҫăвĕ, 2 апат кашăкĕ сахăр ҫăнăхĕ.*

1. Хура сливăна шывра 20 минут шўтермелле, типĕтмелле, мăйăрпа пĕрле аш арманĕ витĕр кăлармалла.

2. Чустана йĕтĕрлемелле те тўрĕ кĕтес евĕр (20х14 см) касса кăлармалла. Унтан кашнинчен икĕ виҫкĕтеслĕх касмалла.

3. Виҫкĕтеслĕхваррине хура сливăпа мăйăр хутăшне хурса рулет пек ҫавăрмалла. Ыттисене те ҫак мелпе пурнăҫламалла. Пурне те ўсен-тăран ҫăвĕ сĕрнĕ противень ҫине хумалла, 40-50 минут ăшă вырăна лартмалла, духовкăра саралса хĕреличчен тытмалла. Хатĕр рогалик ҫине сахăр ҫăнăхĕ сапмалла.

## ПĔЛНИ ПĂСМАСТЬ

### Юрма чуста

Юрма чустаран хатĕрленĕ апат-ҫимĕҫе духовкăра пĕр пек температурăра противень ҫинче пĕҫереҫҫĕ. Противене ҫупа сĕрмелле мар, шывпа кăштах йĕпетсе илмелле ҫеç. Апат-ҫимĕҫе вилкăпа шăтармалла. Ҫăмартапа сĕрме кирлĕ мар. Мĕншĕн тесен пиҫнĕ чухне хытать.

Юрма чустаран пĕҫернĕ чухне ҫимĕҫ – булка, печени, кекс, рулет, торт валли корж – тĕпне пергамент хут хурса ҫупа сĕрĕр. Капла рулета ҫăмăллăнах ҫавăрма, коржа е кекса формăран кăларма лайăх. Савăт та таса юлать.

Кукăлĕн аялти пайĕ лайăх хăпартăр тата типĕ юлтăр тесен унăн ăшне хуриччен чуста ҫине кăштах крахмал сапмалла.

Бисквит, кулич е кекс пĕҫернĕ чухне типесрен духовкăна шыв тултарнă савăт лартмалла.

Йĕри-тавра пушăрах вырăн хăварсан тимĕр ывăс ҫинчи кукăль лайăххрах сарăлса пиҫет.

### Салат вăрттăнлăхĕ

• Салат ҫулҫине касмаҫҫĕ, алăпа татаҫҫĕ. Капла витаминсем лайăххрах упранаҫҫĕ.

• Ыхра кĕпҫине татсан ывăтма кирлĕ мар. Ăна тураса шăнтма хурăр. Вăл яшкана тутă кĕртет.

• Салат хатĕрленĕ май савăт ăшне ыхрапа сĕрсен ҫимĕҫ тути лайăхланать.

• Винегрета пĕр кашăк сĕт ярсан техĕмлĕрех пулать.

### Ыхра тасатма

Нумай ыхра тасатмалла пулсан шăлсем ҫине уйăрмалла. Ăшă шыва ярса 20-30 минут тытмалла, исленнĕ май ăна ҫăмăллăнах хуппинчен тасатма пулать.



## ЧĂВАШ НАЦИ РАДИО ПРОГРАММИ (72,41 УКВ, 105 FM хумсем ҫинче)

**Тунтикун, апрелĕн 13-мĕшĕ**

7.10-8.00 Ирхи кăмăл. (12+) 8.10-8.30, 11.10-11.30, 15.10-15.30, 16.10-16.30, 17.10-17.30, 18.10-18.30, 19.10-19.30, 20.10-20.30, 21.10-21.30, 23.10-23.30 Юрă вăчăри. (12+) 8.30-9.00 18.30-19.00 Тема дня. (12+) 9.10-10.00 Неформат. (12+) 6.30-7.00, 10.10-10.30, 22.10-22.30 Тăван юрă-кĕвĕ. (12+) 10.30-11.00 Ҫĕр сум. (12+) 11.30-12.00 Чĕрере ҫуралнă сăвăсем. ( вăрçă поэчĕсем) (12+) 12.10-14.00 Чĕререн тухакан сăмахсем. (12+) 14.10-15.00 Путешествие в историю чуваш. (12+) 15.30-16.00 Пултарулăх ҫулĕпе. (12+) 16.30-17.00 Ялтан яла. (12+) 17.30-18.00 Путь к здоровью. (12+) 19.30-20.00 Тĕплĕ калаҫу. (12+) 20.30-21.00 Уйăхпи юмахĕсем. (6+) 21.30-22.00 Ҫемье ăшши. (12+) 22.10-23.00 Янра юрă. (12+) 23.30-24.00 Присягая Родине. (12+)
**Ҫĕнĕ юрă** 6.05-6.10, 7.05-7.10, 8.05-8.10, 9.05-9.10, 10.05-10.10, 11.05-11.10, 14.05-14.10, 15.05-15.10, 16.05-16.10, 17.05-17.10, 18.05-18.10, 19.05-19.10, 20.05-20.10, 21.05-21.10, 22.05-22.10

**Тунтикун – эрнекун**

6.00, 7.00, 12.00, 13.00, 15.00, 18.00, 20.00, 22.00 - Хыпарсем. (12+)
8.00, 9.00, 11.00, 14.00, 16.00, 17.00, 19.00, 21.00, 23.00 - Новости. (12+)

**Ытларикун, апрелĕн 14-мĕшĕ**

6.10-6.30, 7.10-8.00 Ирхи кăмăл. (12+) 6.30-7.00, 21.30-22.00 Республика сасси. (12+) 8.10-8.30, 9.10-9.30, 10.10-10.30, 16.10-16.30, 17.10-17.30, 18.10-18.30, 20.10-20.30, 21.10-21.30, 22.10-22.30, 23.10-23.30 Юрă вăчăри. (12+) 8.30-9.00 Тема дня. (12+) 9.10-10.00 Тĕплĕ калаҫу. (12+) 10.30-11.00 Социальный вопрос. (12+) 11.10-11.30 Тăван юрă-кĕвĕ. (12+) 11.30-12.00, 22.30-23.00 Ҫемье ăшши. (12+) 12.05-14.00 Чĕререн тухакан сăмахсем. (12+) 14.10-15.00 Янра юрă. (12+) 15.30-16.00 Ачалăх урхамахĕ. (6+) 16.30-17.00, 23.30-24.00 Экстренный час. (16+) 17.30-18.00 Ҫĕр сум. (12+) 18.30-19.00 Вăрçă ахрăмĕ. (12+) 19.10-20.00 Асăмри юрăсем. (радиокараоке) (12+) 20.30-21.00 Уйăхпи юмахĕсем. (6+)
**Ҫĕнĕ юрă** 6.05-6.10, 7.05-7.10, 8.05-8.10, 9.05-9.10, 10.05-10.10, 11.05-11.10, 14.05-14.10, 15.05-15.10, 16.05-16.10, 17.05-17.10, 18.05-18.10, 19.05-19.10, 20.05-20.10, 21.05-21.10, 22.05-22.10

**Юнкун, апрелĕн 15-мĕшĕ**

6.10-6.30, 7.10-8.00 Ирхи кăмăл. (12+) 6.30-7.00, 22.30-23.00 Республика сасси. (12+) 8.10-8.30, 10.10-10.30, 11.10-11.30, 14.10-14.30,15.10-15.30, 16.10-16.30, 18.10-18.30, 20.10-20.30, 21.10-21.30, 22.10-22.30, 23.10-23.30 Юрă вăчăри. (12+) 9.10-10.00 Женская среда. (12+) 10.30-11.00 Вăрçă ахрăмĕ. (12+) 11.30-12.00 Ҫĕр сум. (12+) 12.05-14.00 Чĕререн тухакан сăмахсем. (12+) 14.30-15.00 Социальный вопрос. (12+) 15.30-16.00 Măшăр ҫунат. (12+) 16.30-17.00, 23.30-24.00 Экстренный час. (16+) 17.10-18.00 Литература ҫўпҫинчен. (12+) 18.30-19.00 Ялтан яла. (12+) 19.10-19.30 Тема дня. (12+) 19.30-20.00 Тĕплĕ калаҫу. (12+) 20.30-21.00 Уйăхпи юмахĕсем. (6+) 21.10-22.00 Ҫиларман-шоу. (12+)
**Ҫĕнĕ юрă** 6.05-6.10, 7.05-7.10, 8.05-8.10, 9.05-9.10, 10.05-10.10, 11.05-11.10, 14.05-14.10, 15.05-15.10, 16.05-16.10, 17.05-17.10, 18.05-18.10, 19.05-19.10, 20.05-20.10, 21.05-21.10, 22.05-22.10

**Кĕҫнерникун, апрелĕн 16-мĕшĕ**

6.10-6.30 Тăван юрă-кĕвĕ. (12+) 7.10-8.00, 6.30-7.00, 8.10-8.30, 9.10-9.30, 10.10-10.30, 14.10-14.30, 17.10-17.30, 20.10-20.30, 22.10-22.30, 23.10-23.30 Юрă вăчăри. (12+) 6.30-7.00 Ялтан яла. (12+) 8.30-9.00, 22.30-23.00 Республика сасси. (12+) 9.30-10.00 Тĕплĕ калаҫу. (12+) 10.30-11.00 Книга жалоб. (12+) 11.10-12.00 Чĕнтĕрлĕ чаршав. (12+) 12.05-14.00 Чĕререн тухакан сăмахсем. (12+) 15.10-16.00 Путешествие в историю чуваш. (12+) 16.10-16.30 Тăван юрă-кĕвĕ. (12+) 16.30-17.00, 23.30-24.00 Экстренный час. (16+) 17.30-18.00 Вĕрентекен сăмахĕ. (12+) 18.30-19.00 Путь к здоровью. (12+) 19.10-19.30 Тема дня. (12+) 19.30-20.00 Măшăр ҫунат. (12+) 20.30-22.00 Ҫичĕ юрă. (12+) 22.30-23.00 Чĕрере ҫуралнă сăвăсем. ( вăрçă поэчĕсем) (12+)
**Ҫĕнĕ юрă** 6.05-6.10, 7.05-7.10, 8.05-8.10, 9.05-9.10, 10.05-10.10, 11.05-11.10, 14.05-14.10, 15.05-15.10, 16.05-16.10, 17.05-17.10, 18.05-18.10, 19.05-19.10, 20.05-20.10, 21.05-21.10, 22.05-22.10

**Эрнекун, апрелĕн 17-мĕшĕ**

6.10-6.30, 7.10-8.00 Ирхи кăмăл. (12+) 8.10-8.30, 14.10-14.30, 18.10-18.30 Юрă вăчăри. (12+) 8.30-9.00, 19.10-19.30 Тема дня. (12+) 9.10-10.00 Неформат. (12+) 10.30-11.00 Тăван ăс-хакăл. (12+) 11.30-12.00 Пултарулăх ҫулĕпе. (12+) 12.05-14.00 Чĕререн тухакан сăмахсем. (12+) 14.10-15.00 Асăмри юрăсем. (радиокараоке) (12+) 15.10-16.00 Пачăшкă сăмахĕ. (12+) 16.10-16.30,17.10-17.30 Тăван юрă-кĕвĕ. (12+) 16.30-17.00 Социальный вопрос. (12+) 17.10-18.00 Литература ҫўпҫинчен. (12+) 18.30-19.00 Ялтан яла. (12+) 19.30-20.00 Присягая Родине. (12+) 20.10-24.00 Каҫхи микс. (12+)
**Ҫĕнĕ юрă** 6.05-6.10, 7.05-7.10, 8.05-8.10, 9.05-9.10, 10.05-10.10, 11.05-11.10, 14.05-14.10, 15.05-15.10, 16.05-16.10, 17.05-17.10, 18.05-18.10, 19.05-19.10, 20.05-20.10, 21.05-21.10, 22.05-22.10

**Шăматкун, апрелĕн 18-мĕшĕ**

6.00-7.00 Чĕнтĕрлĕ чаршав. (12+) 7.05-8.00 Женская среда. (12+) 9.05-9.30, 10.05-10.30, 11.05-11.30, 15.05-15.30, 16.05-16.30, 18.10-18.30, 19.05-19.30 Юрă вăчăри. (12+) 8.30-9.00 Голос Республики. (12+) 9.30-10.00 Преодоление. (12+) 10.30-11.00 Чĕрĕлĕх ҫути. (12+) 11.30-12.00 Ачалăх урхамахĕ. (12+) 12.00-12.10, 16.00-16.10 Хыпарсем. (12+) 12.10-14.00 Чĕререн тухакан сăмахсем. (12+) 14.05-15.00 Радиотеатр. (12+) 15.30-16.00 Măшăр ҫунат. (12+) 16.30-17.00 Символ веры. (12+) 17.30-18.00 Шурăмпуҫ. (12+) 18.30-19.00 Вăрман кĕвви. (12+) 19.30-20.00 Уйăхпи юмахĕсем. (6+) 20.05-24.00 Каҫхи микс. (12+)
**Ҫĕнĕ юрă** 6.05-6.10, 7.05-7.10, 8.05-8.10, 9.05-9.10, 10.05-10.10, 11.05-11.10, 14.05-14.10, 15.05-15.10, 16.05-16.10, 17.05-17.10, 18.05-18.10, 19.05-19.10, 20.05-20.10, 21.05-21.10, 22.05-22.10

**Вырсарникун, апрелĕн 19-мĕшĕ**

6.05-6.30, 7.05-7.30, 9.05-9.30, 15.05-15.30 Юрă вăчăри. (12+) 6.30-7.00 Пултарулăх ҫулĕпе. (12+) 7.30-8.00 Чĕрĕлĕх ҫути. (12+) 8.05-8.30, 11.05-11.30, 16.10-16.30 Тăван юрă-кĕвĕ. (12+) 8.30-9.00 Присягая Родине. (12+) 9.30-10.00 Шурăм пуҫ. (12+) 10.05-11.00 Ҫичĕ юрă. (12+) 11.30-12.00 Ачалăх урхамахĕ.(12+) 12.05-14.00 Чĕререн тухакан сăмахсем. (12+) 14.05-15.00 Радиотеатр. (12+) 15.30-16.00 Тĕплĕ калаҫу. (12+) 16.30-17.00 Голос Республики (12+) 17.10-18.00 Ҫиларман-шоу. (12+) 18.30-19.00 Ялтан яла. (12+) 19.05-20.00 Янра юрă! (хит-парад) (12+) 20.05-24.00 Каҫхи микс. (12+)
**Ҫĕнĕ юрă** 6.05-6.10, 7.05-7.10, 8.05-8.10, 9.05-9.10, 10.05-10.10, 11.05-11.10, 14.05-14.10, 15.05-15.10, 16.05-16.10, 17.05-17.10, 18.05-18.10, 19.05-19.10, 20.05-20.10, 21.05-21.10, 22.05-22.10

## ЮРАТНĂ ЮРĂ

### Пилеш кайăксем

1. Пахчара ҫуркунне, каҫхине, каҫăхса
Пилеш ҫинче юр юрлаҫҫĕ пилеш кайăксем.
Шăплăха сас ҫурса, таврана янратса,
Мана валли ,тен, юрлаҫҫĕ илемлĕ юрăсем.

**Хушса юрламалли:**

Пилеш ҫинче пилеш кайăксем,
Ман чуна сиссе юрлаҫҫĕ-ши вĕсем?
Аякран ҫула тухнă пулĕ ачамсем,
Кил енне амăшĕ патне тĕпренчĕксем.

2. Виҫҫĕшĕ, виҫ енне, виҫҫĕш пек,
виҫ енчен,
Мĕнле аннен чун-чĕри кĕтмĕ ачисене.
Вăрттăн юхаҫҫĕ куҫҫулĕпех пит ҫинчен,
Ҫапла кĕтет кашни килте, кашни анне.

**Хушса юрламалли.**

3. Пахчара ҫуркунне, каҫхине, каҫăхса,
Ытла тăсса ан юрлăр-ха, пилеш кайăксем.
Шăплăха сас ҫурса, таврана янратса,
Чуна уҫса ман кăмăлта илемлĕ юрăсем.

## АСРА ТЫТМА

### Шăнтнă пулла мĕнле суйласа илмелле?

**Шăнтнă пулă пахалăхне пĕлме йывăртарах. Ҫавăнпа питĕ асăрханулла пулмалла.**

1 Хăшĕ-пĕри пулă ăшне шприцпа шыв тултарать кăна мар, сиенлĕ химикатсем (полифосфат) те хушать. Капла пулла шыв лайăххрах сăрхăнать. Ҫавăнпа ăна туяннă чухне унра мĕн чухлĕ пăр пулнине пăхăр. Енчен те вăл хулăн пулсан илме тăхтăр. Пулă йăлтăртатса тăни те иккĕлентерет: полифосфат хушман-ши?

2 Пулла тĕрĕс мар упрама пултарнă. Ирĕлтернĕ хыҫҫăн тепĕр хут шăнтсан унăн пахалăхĕ чакать. Ăна темиҫе хут шăнтнине пĕлме йывăр мар: тирĕ тĕксĕм, хўри хутланнă. Пулă пĕр-пĕрин ҫумне ҫыпăҫни, формине ҫухатни те ҫакнах палăртать. Тĕрĕс мар упрасан вăл сарăхать, шăрши улшăнать.



Пулă ҫинчи пăр ҫўхе те пĕр тикĕс пулмалла. Вăл шакканипех уйрăлмалла мар.

Мĕнле ирĕлтерни те пĕлтерĕшлĕ. Пулла холодильника е сивĕрех вырăна хурса ирĕлтермелле. Ҫĕр каҫа хăварсан аванрах. Пулăран шыв нумай юхни – полифосфатпа шыв уҫласа тултарнине пĕлтерет.

## «КАПКĂН» КĔТЕСĔ



*А. Алешин ўкерчĕкĕ*

– Пасарта куҫ хупса ҫўрерĕн-и? Ҫилли силиконран тунăскер!

## КĔСКЕН



**ҪĔРУЛМИ**

...лайăх пиҫме кастрюле 1 апат кашăкĕ шăратнă ҫу ямалла. Техĕмлĕрех пулма ыхра шăлĕ е сухан хушма юрать.

**СОУСА**

... тулă ҫăнăхĕ вырăнне куккурусăнне ярсан ҫăралать, тĕсĕ те илемлĕ.

**БАКЛАЖАН**

... ытлашши ҫуллă пуласран ăна ăшалас умĕн вĕрекен шывра 5 минут тытмалла.

*А. Алешин ўкерчĕкĕ*

## ТУНТИКУН, 13

### ПЕРВЫЙ КАНАЛ

5.00 «Доброе утро»
9.00, 12.00, 15.00, 18.00, 1.00, 3.00 Новости
9.15 «Контрольная закупка»
9.45 «Жить здорово!» 12+
10.55, 3.05 «Модный приговор»
12.20 «Сегодня вечером» 16+
14.25, 15.15, 1.15 «Время покажет» 16+
16.00 «Мужское / Женское» 16+
17.00, 2.05 «Наедине со всеми» 16+
18.45 «Давай поженимся!» 16+
19.50 «Пусть говорят» 16+
21.00 «Время»
21.35 Т/с «ОДНАЖДЫ В РОСТОВЕ» 16+
23.20 «Вечерний Ургант» 16+
0.00 «Познер» 16+
4.05 «Контрольная закупка»

### РОССИЯ 1

5.00 Утро России
9.00, 2.55 «Эволюция будущего»
9.55 «О самом главном»
11.00, 14.00, 17.00, 17.30, 20.00 Вести
11.35, 14.30, 17.10, 19.35 Местное время
11.55 Т/с «ТАЙНЫ СЛЕДСТВИЯ» 12+
12.55 «Особый случай» 12+
14.50 Вести. Дежурная часть
15.00 Т/с «ПОСЛЕДНИЙ ЯНЫЧАР» 12+
16.00 Т/с «ЦВЕТ ЧЕРЕМУХИ» 12+
18.15 «Прямой эфир» 12+
20.50 Спокойной ночи, малыши!
21.00 Т/с «СКЛИФОСОВСКИЙ» 12+
22.50 Т/ф «Штурм Берлина. В логове зверя» 12+
0.00 Т/ф «Севастополь. Русская Троя» 12+
1.05 Т/с «ЗАКОН И ПОРЯДОК-20» 16+
4.00 Комната смеха

### ЧТВ

6.07-6.10, 6.35-6.41, 11.35-11.55, 17.10-17.30 Вести-Чăваш Ен
7.07-7.10, 7.35-7.41, 8.07-8.10, 8.35-8.41 Утро Чувашии
14.30-14.50, 19.35-20.00 Вести-Чувашия

### НТВ

6.00 «Кофе с молоком» 12+
9.00 «ДЕЛО ВРАЧЕЙ» 16+
10.00, 13.00, 16.00, 19.00 Сегодня
10.20 Т/с «ВОЗВРАЩЕНИЕ МУХТАРА. НОВЫЕ СЕРИИ» 16+
12.00 Суд присяжных 16+
13.20 «Суд присяжных. Окончательный вердикт» 16+
14.30 Обзор. Чрезвычайное происшествие
15.00 «Все будет хорошо!» 16+
16.20 Т/с «УЛИЦЫ РАЗБИТЫХ ФОНАРЕЙ» 16+
18.00 «Говорим и показываем» 16+
19.40 Т/с «ЛЕНИНГРАД 46» 16+
21.40 Т/с «МЕНТОВСКИЕ ВОЙНЫ» 16+
22.40 «Анатомия дня»
23.30 Т/с «МАСТЕРА СЕКСА» 18+
0.40 Т/с «ВТОРОЙ ШАНС» 18+
1.45 1.50 «Ахтунг, руссиш!» 0+
2.50 «Судебный детектив» 16+
4.00 Т/с «ПЯТНИЦКИЙ. ГЛАВА ТРЕТЬЯ» 16+
5.00 Т/с «ППС» 16+

## ЫТЛАРИКУН, 14

### ПЕРВЫЙ КАНАЛ

5.00 «Доброе утро»
9.00, 12.00, 15.00, 18.00, 0.00, 3.00 Новости
9.15, 4.05 «Контрольная закупка»
9.45 «Жить здорово!» 12+
10.55, 3.05 «Модный приговор»
12.20, 21.35 Т/с «ОДНАЖДЫ В РОСТОВЕ» 16+
14.15, 15.15, 1.15 «Время покажет» 16+
16.00 «Мужское / Женское» 16+
17.00, 2.05 «Наедине со всеми» 16+
18.45 «Давай поженимся!» 16+
19.50 «Пусть говорят» 16+
21.00 «Время»
23.20 «Вечерний Ургант» 16+
0.15 «Владимир Маяковский. Последний апрель» 16+

### РОССИЯ 1

5.00 Утро России
9.00, 3.35 «Дети индиго» 12+
9.55 «О самом главном»
11.00, 14.00, 17.00, 17.30, 20.00 Вести
11.35, 14.30, 17.10, 19.35 Местное время
11.55 Т/с «ТАЙНЫ СЛЕДСТВИЯ» 12+
12.55 «Особый случай» 12+
14.50 Вести. Дежурная часть
15.00 Т/с «ПОСЛЕДНИЙ ЯНЫЧАР» 12+
16.00 Т/с «ЦВЕТ ЧЕРЕМУХИ» 12+
18.15 «Прямой эфир» 12+
20.50 Спокойной ночи, малыши!
21.00 Т/с «СКЛИФОСОВСКИЙ» 12+
22.50 «Шифры нашего тела. Неизвестные органы» 12+
23.50 «Запрещенная история» 12+
1.45 Т/с «ЗАКОН И ПОРЯДОК-20» 16+
4.35 Комната смеха

### ЧТВ

6.07-6.10, 6.35-6.41, 11.35-11.55, 17.10-17.30 Вести-Чăваш Ен
7.07-7.10, 7.35-7.41, 8.07-8.10, 8.35-8.41 Утро Чувашии
9.00 Утренний гость (на чувашском языке) 12+
9.40-9.55 Главная тема 12+
14.30-14.50, 19.35-20.00 Вести-Чувашия

### НТВ

6.00 «Кофе с молоком» 12+
9.00 «ДЕЛО ВРАЧЕЙ» 16+
10.00, 13.00, 16.00, 19.00 Сегодня
10.20 Т/с «ВОЗВРАЩЕНИЕ МУХТАРА. НОВЫЕ СЕРИИ» 16+
12.00 Суд присяжных 16+
13.20 «Суд присяжных. Окончательный вердикт» 16+
14.30 Обзор. Чрезвычайное происшествие
15.00 «Все будет хорошо!» 16+
16.20 Т/с «УЛИЦЫ РАЗБИТЫХ ФОНАРЕЙ» 16+
18.00 «Говорим и показываем» 16+
19.40 Т/с «ЛЕНИНГРАД 46» 16+
21.40 Т/с «МЕНТОВСКИЕ ВОЙНЫ» 16+
22.40 «Анатомия дня»
23.30 Т/с «МАСТЕРА СЕКСА» 18+
0.40 Т/с «ВТОРОЙ ШАНС» 18+
1.45 Главная дорога 16+
2.30 Дикий мир 0+
2.55 «Судебный детектив» 16+
4.05 Т/с «ПЯТНИЦКИЙ. ГЛАВА ТРЕТЬЯ» 16+
5.00 Т/с «ППС» 16+

## ЮНКУН, 15

### ПЕРВЫЙ КАНАЛ

5.00 «Доброе утро»
9.00, 12.00, 15.00, 18.00, 0.00, 3.00 Новости
9.15, 4.05 «Контрольная закупка»
9.45 «Жить здорово!» 12+
10.55, 3.05 «Модный приговор»
12.20, 21.35 Т/с «ОДНАЖДЫ В РОСТОВЕ» 16+
14.15, 15.15, 2.10 «Время покажет» 16+
16.00 «Мужское / Женское» 16+
17.00, 1.15 «Наедине со всеми» 16+
18.45 «Давай поженимся!» 16+
19.50 «Пусть говорят» 16+
21.00 «Время»
23.20 «Вечерний Ургант» 16+
0.15 «Структура момента» 16+

### РОССИЯ 1

5.00 Утро России
9.00, 3.20 «Шифры нашего тела. Неизвестные органы» 12+
9.55 «О самом главном»
11.00, 14.00, 17.00, 17.30, 20.00 Вести
11.35, 14.30, 17.10, 19.35 Местное время
11.55 Т/с «ТАЙНЫ СЛЕДСТВИЯ» 12+
12.55 «Особый случай» 12+
14.50 Вести. Дежурная часть
15.00 Т/с «ПОСЛЕДНИЙ ЯНЫЧАР» 12+
16.00 Т/с «ЦВЕТ ЧЕРЕМУХИ» 12+
18.15 «Прямой эфир» 12+
20.50 Спокойной ночи, малыши!
21.00 Т/с «СКЛИФОСОВСКИЙ» 12+
22.50 Специальный корреспондент 16+
0.30 «Кузькина мать. Итоги» «Бомба для победителей» 12+
1.35 Т/с «ЗАКОН И ПОРЯДОК-20» 16+
4.15 Комната смеха

### ЧТВ

6.07-6.10, 6.35-6.41, 11.35-11.55, 17.10-17.30 Вести-Чăваш Ен
7.07-7.10, 7.35-7.41, 8.07-8.10, 8.35-8.41 Утро Чувашии
14.30-14.50, 19.35-20.00 Вести-Чувашия

### НТВ

6.00 «Кофе с молоком» 12+
9.00 «ДЕЛО ВРАЧЕЙ» 16+
10.00, 13.00, 16.00, 19.00 Сегодня
10.20 Т/с «ВОЗВРАЩЕНИЕ МУХТАРА. НОВЫЕ СЕРИИ» 16+
12.00 Суд присяжных 16+
13.20 «Суд присяжных. Окончательный вердикт» 16+
14.30 Обзор. Чрезвычайное происшествие
15.00 «Все будет хорошо!» 16+
16.20 Т/с «УЛИЦЫ РАЗБИТЫХ ФОНАРЕЙ» 16+
18.00 «Говорим и показываем» 16+
19.40 Т/с «ЛЕНИНГРАД 46» 16+
21.40 Т/с «МЕНТОВСКИЕ ВОЙНЫ» 16+
22.40 «Анатомия дня»
23.30 Футбол. Лига чемпионов УЕФА. «ПСЖ» (Франция) - «Барселона» (Испания)
1.40 «Лига чемпионов УЕФА. Обзор»
2.15 Квартирный вопрос 0+
3.15 Дикий мир 0+
4.05 Т/с «ПЯТНИЦКИЙ. ГЛАВА ТРЕТЬЯ» 16+
5.00 Т/с «ППС» 16+

## КĔÇНЕРНИКУН, 16

### ПЕРВЫЙ КАНАЛ

5.00 «Доброе утро»
9.00, 15.00, 18.00, 3.00 Новости
9.15, 3.50 «Контрольная закупка»
9.45 «Жить здорово!» 12+
10.55, 2.45, 3.05 «Модный приговор»
12.00 Прямая линия с Владимиром Путиным
15.15 «Время покажет» 16+
16.00 «Мужское / Женское» 16+
17.00, 0.50 «Наедине со всеми» 16+
18.45 «Давай поженимся!» 16+
19.50 «Пусть говорят» 16+
21.00 «Время»
22.00 Т/с «ОДНАЖДЫ В РОСТОВЕ» 16+
23.45 «Политика» 16+
1.45 «Россия от края до края»

### РОССИЯ 1

5.00 Утро России
9.00, 2.50 «Кузькина мать. Итоги» «Бомба для победителей» 12+
9.55 «О самом главном»
11.00, 15.00, 20.00 Вести
12.00 Прямая линия с Владимиром Путиным
17.30, 23.20 «Вечер с Владимиром Соловьевым» 12+
21.25 Т/с «СКЛИФОСОВСКИЙ» 12+
1.05 Т/с «ЗАКОН И ПОРЯДОК-20» 16+
3.50 Комната смеха

### ЧТВ

6.07-6.10, 6.35-6.41, 11.35-11.55, 17.10-17.30 Вести-Чăваш Ен
7.07-7.10, 7.35-7.41, 8.07-8.10, 8.35-8.41 Утро Чувашии
9.00 Доступная среда. С сурдопереводом 12+
9.15-9.55 Театру сатиры и юмора-25 лет 1 часть (на чувашском языке) 12+
14.30-14.50, 19.35-20.00 Вести-Чувашия

### НТВ

6.00 «Кофе с молоком» 12+
9.00 «ДЕЛО ВРАЧЕЙ» 16+
10.00, 13.00, 16.00, 19.00 Сегодня
10.20 Т/с «ВОЗВРАЩЕНИЕ МУХТАРА. НОВЫЕ СЕРИИ» 16+
12.00 Суд присяжных 16+
13.20 «Суд присяжных. Окончательный вердикт» 16+
14.30 Обзор. Чрезвычайное происшествие
15.00 «Все будет хорошо!» 16+
16.20 Т/с «УЛИЦЫ РАЗБИТЫХ ФОНАРЕЙ» 16+
18.00 «Говорим и показываем» 16+
19.40 Т/с «ЛЕНИНГРАД 46» 16+
21.30 «Анатомия дня»
21.50 Футбол. Лига Европы УЕФА. «Севилья» (Испания) - «Зенит» (Россия)
0.00 «Ленинград 46. Послесловие» 16+
0.55 Т/с «МЕНТОВСКИЕ ВОЙНЫ» 16+
1.55 «Лига Европы УЕФА. Обзор» 16+
2.25 «Дачный ответ» 0+
3.30 Дикий мир 0+
4.05 Т/с «ПЯТНИЦКИЙ. ГЛАВА ТРЕТЬЯ» 16+
5.05 Т/с «ППС» 16+

## ЭРНЕКУН, 17

### ПЕРВЫЙ КАНАЛ

5.00 «Доброе утро»
9.00, 12.00, 15.00, 18.00 Новости
9.15 «Контрольная закупка»
9.45 «Жить здорово!» 12+
10.55 «Модный приговор»
12.20 Т/с «ОДНАЖДЫ В РОСТОВЕ» 16+
14.15, 15.15 «Время покажет» 16+
16.00 «Мужское / Женское» 16+
17.00 «Жди меня»
18.45 «Человек и закон» 16+
19.50 «Поле чудес» 16+
21.00 «Время»
21.30 «Голос. Дети» Финал
23.55 «Вечерний Ургант» 16+
0.50 Коллекция Первого канала. «Матадор» 16+
1.50 Х/ф «ПАРНИ НЕ ПЛАЧУТ» 16+
4.00 Х/ф «ДВАДЦАТИПЯТИБОРЬЕ» 16+

### РОССИЯ 1

5.00 Утро России
8.55 Мусульмане
9.10 «Главная сцена» Специальный репортаж
10.05 «О самом главном»
11.00, 14.00, 17.00, 17.30, 20.00 Вести
11.35, 14.30, 17.10, 19.35 Местное время
11.55 Т/с «ТАЙНЫ СЛЕДСТВИЯ» 12+
12.55 «Особый случай» 12+
14.50 Вести. Дежурная часть
15.00 Т/с «ЦВЕТ ЧЕРЕМУХИ» 12+
18.15 «Прямой эфир» 12+
21.00 «Главная сцена»
23.50 Х/ф «МОЯ ЛЮБОВЬ» 12+
1.55 Х/ф «ЧЕРТОВО КОЛЕСО» 12+
3.40 Горячая десятка 12+ До 4.48

### ЧТВ

6.07-6.10, 6.35-6.41, 17.10-17.30 Вести-Чăваш Ен
7.07-7.10, 7.35-7.41, 8.07-8.10, 8.35-8.41 Утро Чувашии
9.10 Главная тема 12+
9.20 Дороги Чувашии 12+
9.30 Профпортрет 12+
9.45-10.05 Сельская жизнь 12+
11.35-11.55 Вести-ПФО
14.30-14.50, 19.35-20.00 Вести-Чувашия

### НТВ

6.00 «Кофе с молоком» 12+
9.00 «ДЕЛО ВРАЧЕЙ» 16+
10.00, 13.00, 16.00, 19.00 Сегодня
10.20 Т/с «ВОЗВРАЩЕНИЕ МУХТАРА. НОВЫЕ СЕРИИ» 16+
12.00 Суд присяжных 16+
13.20 «Суд присяжных. Окончательный вердикт» 16+
14.30 Обзор. Чрезвычайное происшествие
15.00 «Все будет хорошо!» 16+
16.20 Т/с «УЛИЦЫ РАЗБИТЫХ ФОНАРЕЙ» 16+
18.00 «Говорим и показываем» 16+
19.40 Х/ф «НАВОДЧИЦА» 16+
23.20 Х/ф «ПРОСТО ДЖЕКСОН» 16+
1.15 «Судебный детектив» 16+
2.30 Х/ф «ДЕЛО ТЕМНОЕ» 16+
3.25 Дикий мир 0+
3.45 Т/с «НАРУЖНОЕ НАБЛЮДЕНИЕ» 16+

## ШĂМАТКУН, 18

### ПЕРВЫЙ КАНАЛ

5.50 Т/с «СТРАНА 03» 16+
6.00, 10.00, 12.00, 18.00 Новости
6.10 «Страна 03» 16+
8.00 «Играй, гармонь любимая!»
8.45 «Смешарики. Новые приключения»
9.00 «Умницы и умники» 12+
9.45 «Слово пастыря»
10.15 «Смак» 12+
10.55 «Голос. Дети» На самой высокой ноте»
12.10 «Идеальный ремонт»
13.00 «На 10 лет моложе» 16+
13.50 «Барахолка» 12+
14.40 «Голос. Дети» Финал
17.00 «Кто хочет стать миллионером?»
18.15 «Угадай мелодию» 12+
19.00 Коллекция Первого канала
21.00 «Время»
21.20 «Сегодня вечером» 16+
23.00 «Что? Где? Когда?»
0.00 Х/ф «РЕАЛЬНЫЕ ПАРНИ» 16+
1.55 Х/ф «НОТОРИУС» 16+
4.05 «Модный приговор»
5.05 «Мужское / Женское» 16+

### РОССИЯ 1

4.50 Х/ф «ДВОЙНОЙ ОБГОН»
6.35 «Сельское утро»
7.05 Диалоги о животных
8.00, 11.00, 14.00 Вести
8.10, 11.30, 14.30 Местное время. Вести-Москва
8.25 «Военная программа» Александра Сладкова
8.50 «Планета собак»
9.25 Субботник
10.05 «Освободители» «Кавалеристы» 12+
11.40 «Звездные войны Владимира Челомея»
12.40, 14.40 Х/ф «СЛЕПОЙ РАСЧЕТ» 12+
17.20 «Танцы со звездами» Сезон - 2015
20.00 Вести в субботу
20.45 Х/ф «СЕМЬЯ МАНЬЯКА БЕЛЯЕВА» 12+
0.35 Х/ф «СУДЬБА МАРИИ» 12+
2.35 Х/ф «САЙД-СТЕП» 16+
4.45 Комната смеха

### ЧТВ

8.10-8.20 Вести-Чăваш Ен
10.05 Для вас, любимые. Концерт по заявкам 12+
10.50-11.00 Солнечный зайчик (на чувашском языке) 12+
14.30-14.40 Вести-Чувашия

### НТВ

5.35, 1.10 Т/с «ПРОФИЛЬ УБИЙЦЫ» 16+
7.25 Смотр 0+
8.00, 10.00, 13.00 Сегодня
8.15 «Золотой ключ» 0+
8.45 «Медицинские тайны» 16+
9.25 «Готовим с Алексеем Зиминым» 0+
10.20 Главная дорога 16+
11.00 «Поедем, поедим!» 0+
11.50 Квартирный вопрос 0+
13.20 Своя игра 0+
14.10 «Я худею» 16+
15.10 «Вторая мировая. Великая Отечественная» «Охота на вождей» 12+
16.15 Т/с «УЛИЦЫ РАЗБИТЫХ ФОНАРЕЙ» 16+
18.00 Следствие вели…16+
19.00 «Центральное телевидение» с Вадимом Такменевым
20.00 «Новые русские сенсации» 16+
22.00 Ты не поверишь! 16+
23.00 Х/ф «ДИКАРИ» 16+
3.10 Т/с «НАРУЖНОЕ НАБЛЮДЕНИЕ» 16+
5.00 Т/с «ППС» 16+

## ВЫРСАРНИКУН, 19

### ПЕРВЫЙ КАНАЛ

6.00, 10.00, 12.00, 17.45 Новости
6.10 Т/с «СТРАНА 03» 16+
8.10 «Армейский магазин» 16+
8.45 «Смешарики. ПИН-код»
8.55 «Здоровье» 16+
10.15 «Непутевые заметки» 12+
10.35 «Пока все дома»
11.25 «Фазенда»
12.15 «Горько!» 16+
13.15 «Теория заговора» 16+
14.20 «Алла Пугачева - моя бабушка» 12+
15.25 Коллекция Первого канала
18.00 «Точь-в-точь» 16+
21.00 Воскресное «Время»
22.30 «Клуб Веселых и Находчивых» Высшая лига 16+
0.30 Х/ф «ПРОБЛЕСКИ НАДЕЖДЫ» 16+
2.35 «Модный приговор»
3.35 «Мужское / Женское» 16+

### РОССИЯ 1

5.20 Х/ф «БЕЗ СРОКА ДАВНОСТИ»
7.20 Вся Россия
7.30 Сам себе режиссер
8.20 «Смехопанорама» Евгения Петросяна
8.50 Утренняя почта
9.30 «Сто к одному» Неделя в городе
11.00, 14.00 Вести
11.25, 2.35 «Россия. Гений места»
12.25, 14.30 Х/ф «НЕДОТРОГА» 12+
16.55 «Один в один» 12+
20.00 Вести недели
22.00 «Воскресный вечер с Владимиром Соловьевым» 12+
0.35 Х/ф «АЛЬПИНИСТ» 12+
3.30 «Планета собак»
4.05 Комната смеха

### ЧТВ

10.20-11.00 Вести-Чувашия. События недели

### НТВ

6.00, 0.55 Т/с «ПРОФИЛЬ УБИЙЦЫ» 16+
8.00, 10.00, 13.00, 15.30 Сегодня
8.15 «Русское лото плюс» 0+
8.50 Их нравы 0+
9.25 Едим дома 0+
10.20 «Первая передача» 16+
11.00 «Чудо техники» 12+
11.50 «Дачный ответ» 0+
13.20 СОГАЗ - Чемпионат России по футболу 2014/2015. ЦСКА - «Краснодар»
15.50 Т/с «УЛИЦЫ РАЗБИТЫХ ФОНАРЕЙ» 16+
18.00 Чрезвычайное происшествие. Обзор за неделю
19.00 «Сегодня. Итоговая программа» с Кириллом Поздняковым
20.00 «Список Норкина» 16+
21.05 Х/ф «МЕРТВОЕ СЕРДЦЕ» 16+
2.55 Дикий мир 0+
3.15 Т/с «НАРУЖНОЕ НАБЛЮДЕНИЕ» 16+
5.05 Т/с «ППС» 16+


### ĔÇ / РАБОТА

**126.** В связи с началом строительства нового объекта **требуются монолитчики, каменщики.** Тел. 8-925-002-22-38.
*Реклама*

## РЕКЛАМА, ПĔЛТЕРŶСЕМ

### *СУТАТĂП / ПРОДАЮ*

**78. Гравмассу, песок, щебень, керамблоки.** Доставка. Т.: 89176500385, 89603073399.

**79. ПРИЦЕПЫ** 1ПТС2 и мотоблока. Т. 8-905-344-47-35.

**89. БЛОКИ керамзитобетонные** от производителя. Высокое качество. Низкие цены. **Доставка.** Документы. Т. 89373866629.

**93. Кирпич** красный одинарный, полуторный, силикатный, облицовочный (все цвета), **половняк, КББ** 20х20х40, 20х12х40, **гравмассу,** керамзит. Доставка. Разгрузка кран-манипулятором. Т.: 44-20-97, 89033582097.



**95. ТРУБЫ ВИТЫЕ,** офактуренные; **кованые элементы** в ассортименте. Т. 8-927-844-15-01.

**111. ТЕПЛИЦЫ** из поликарбоната **от производителя**. Д-ка. Уст-ка. Скидки. Т. 89876667423.

**112. ТЕПЛИЦЫ от производ-ля.** Д-ка. Установка. Т. 89875751707.

**127. ТЕПЛИЦЫ** из поликарбоната от производителя. Т. 8-919-679-47-04.

**128. ТЕПЛИЦЫ** из поликарбоната от производителя. Т. 8-927-667-62-02.

**133. СЕТКУ-РАБИЦУ** от производителя около 100 видов, **сетку** сварную, кладочную, штукатурную; проволоку, **столбы.** Доставка. Т.: 683045, 89379522211.

**138. ОКНА, ТЕПЛИЦЫ,** обшивка домов, **двери** стальные. Т. 89196624097.

**143. ТЕПЛИЦЫ от производителя** – от 5950 руб. Т. 89276682828.

**148. ПЛАСТИКОВЫЕ ОКНА** – немецкое качество. Низкие цены. Замер и доставка – бесплатно. Т.: 89278506139, 89278500856.

**154. ОКНА и ПОТОЛКИ** – немецкое качество. Монтаж по ГОСТу. **Пенсионерам скидки.** Т. 89176627164.

**164. Бой кирпича, песок, гравмассу,** торф, чернозем. Тел. 8-927-990-30-70.

**174. МОГИЛЬНЫЕ ОГРАДЫ, заборы, ворота** и др. изделия от производителя Т. 89276682828.

**180. Отруби, зерно, к/корм.** Д-ка. Т. 89373916016.

**183.** Окна Чувашии. **ПЛАСТИКОВЫЕ ОКНА, жел. двери.** Т. 89050281182.

**188. Гравмассу, песок, щебень.** Т. 8-927-846-24-10.

**203. ГЕРБИЦИДЫ.** Рассрочка. Бартер. Т. 89023271853.

**231.** Ленточные **пилы по дереву.** Дисковые и рамные пилы. **Станки.** Т. 8-927-668-02-12.

**232. Заменитель цельного молока** для телят и поросят. Т. 89876681717.

**787. Кирпич** любой, **гравмассу, песок, щебень.** Доставка. Т. 89033228078.

### *ПУЛĂШУ / УСЛУГИ*

**32. Лечение алкоголизма.** Анонимно. Консультация бесплатная с 8 до 19 ч., сб., воскр. с 8 до 13 ч. А: Чеб., пр. Ленина, 56. **Т. 552733.**
*Лиц. ЛО 21-01-001 096 от 06.06.2014г. МЗСР РФ. Имеются противопоказания, проконсультируйтесь со специалистом.*

**36. Известный** Чебоксарский **экстрасенс,** маг, хиромант, астролог **Олег Боголюбов** решает многие жизненные проблемы. Т. 89674743783.

**38. Чистка колодцев.** Т. 89613429059.

**70. ОКНА, ДВЕРИ, ПОТОЛКИ.** Доступные цены. Договор, гарантия. Замер и консультация – бесплатно. Т. 89170788391.

**77. НАТЯЖНЫЕ ПОТОЛКИ** за 1 день. Т. 8-937-397-24-42.

**152. Бурение** скважин на воду. Т. 89603021293.

**179. Бурение скважин на воду.** Т. 89061312124.

### *ТУЯНАТĂП / КУПЛЮ*

**28. Вăкăр, ĕне, тына,** сысна амисем. Т. 8-927-999-37-37.

**39. Коров, бычков и лошадей.** Т. 89603109878.

**50. Коров.** Т. 89278508564.

### *ĔÇ / РАБОТА*

**54. МОНОЛИТЧИКИ, КАМЕНЩИКИ** – в Подмосковье. Т. 89176737773.



«ХРЕСЧЕН САССИ»
Обществăпа политика хаçачĕ
Индекс 54838
Учредительсем – Чăваш Республикин Информаци политикин тата массăллă коммуникацисен министерстви, Чăваш Республикин Информаци политикин тата массăллă коммуникацисен министерствин «Хыпар» Издательство çурчĕ» Чăваш Республикин хăйтытăмлă учрежденийĕ

ДИРЕКТОР-ТĔП РЕДАКТОР – В.В. ТУРКАЙ
Редактор – В.В. Петрова
РЕДКОЛЛЕГИ:
В.В. Петрова – редактор
И.П. Никитина – корреспондент
Л.А. Никитина – корреспондент
Е.А. Трофимова – хаçат операторĕ

www.hypar.ru,
e-mail: hreschen@cbx.ru
Редакципе издатель адресĕ: Шупашкар, И. Яковлев пр., 13.
Телефонсем:
директор-тĕп редактор – 56-00-67,
пайсем – 62-50-06, 62-04-54,
реклама пайĕ тел./факс – 28-83-70.
Факс (8352) 62-50-06

Хаçата 2013 çулхи раштав уйăхĕн 10-мĕшĕнче Федерацин çыхăну, информаци технологийĕсемпе массăллă коммуникацисен сферинчи саккунсене пăхăннине сăнаса тăракан службин Чăваш Республикинчи управленийĕ ПИ ТУ 21-00305 № регистрациленĕ.
Хаçата «Хыпар» Издательство çурчĕ» АУ техника центрĕнче калăпланă хатĕр оригинал-макетран «Чăваш ЕН» ИПК» АУО типографийĕнче пичетленĕ. 428019, Шупашкар, И. Яковлев пр-чĕ, 13.

Графикпа 17 сехетре алă пусмалла.
17 сехетре алă пуснă.
Заказ 1333
Тираж 19719

* Рекламăпа пĕлтерўсем. Реклама тексчĕсемпе пĕлтерўсемшĕн вĕсене паракансем яваплă.